Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – pchd21.ru
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – rdub21.ru – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Никифор Тарасович Васянка**
**Книга: Йăлăмра = В заволжском лесу**
**Рассказ: Кăранташ (Сантăр мучи калавĕ)**

Пĕрре эпĕ юлташсемпе пĕрле кӳршĕри пасар ялне çимĕке кайрăм. Ун чухне эпĕ тăххăрта пулнă.

Хурăнлă çул тăрăх шап-шурă тум тумланнă халăх утать. Икшер-виçшер е çич-сакăр çын таранах пухăнса, вĕçĕмсĕр шакăлтатса пыраççĕ. Вĕсем уяв çитнĕ май пурте тирпейлĕрех тумланнă. Çамрăксем те, ваттисем те катан пир кĕпесем тăхăннă, çĕнĕ çăпата сырнă. Хушăран сăран атă, пушмак тăхăннисем те пур. Каччисем пилĕкĕсене пурçăн пиçиххисем çыхнă. Хĕрсен пилĕкĕсенчи сарă, хĕрлĕ, симĕс е кĕрен çӳхе хăюсем çилпе вĕлкĕшкелесе илеççĕ.

Эпир ачасем, çул çинчи, тусана вĕçтерсе, пĕр-пĕринпе вылякаласа утатпăр.

Акă çулваррипе пĕр урапа чĕриклетсе пырать. Ун çине çăка чĕрессем тиенĕ, пĕр уйран çӳпçи, юман катка хунă.

Çамрăк арçынпа хĕрарăм ăйăр кӳлнĕ урапа çинче ярăнса иртсе кайрĕç. Ăйăрăн мăйĕнче пĕчĕк шăнкăрав тенкĕлтетет.

Унччен те пулмарĕ, рулĕ çумĕнчи çап-çутă шăнкăравне янраткаласа, пĕр лайăх тумланнă çын утсăр урапапа (хальхи пек каласан, велосипедпа ĕнтĕ) вĕçтерсе çитет. Кӳршĕ ялта вĕрентекен Анисимов учитель пулнă иккен вăл. Ун чухне хальхи пек мар, утсăр урапапа çӳрекен çын сайраччĕ. Эпир утсăр урапан кайрипе малти кусатăранĕсем ирхи хĕвел çутипе йăлтăртатса пынине питĕ киленсе пăхса юлтăмăр.

Акă тата ещĕк тиенĕ урапа, ерипен хăлтăртатса, пирĕнтен иртет. Ун çинче кăвакрах сăхманне йӳле янă пиччепе хура шупăр тăхăннă инки тата виçĕ ача…

Çапла, инçетререхри ялсенчен çынсем çимĕке ут кӳлсе пыраççĕ.

Эпир çуранах, апла пулин те, питĕ савăнăçлă. Чаплă çимĕк ачисем мар-и!

Яла пырса кĕтĕмĕр.

Çимĕк пуххи пуçланнă та ĕнтĕ. Пасар ялĕнче халăх хĕвĕшет. Урамсенче тата укăлча картинче çатан урапасем те вĕçĕ-хĕррисĕр. Хăш-пĕр çатанĕсем тӳрех ялти çынсем картишнелле кĕрсе каяççĕ. Хăнасем те çатан çинчен сике-сике анаççĕ. Пĕри алла хут купăс тытнă. Тĕрлесе илемлетнĕ кĕпе тăхăннă каччăсем çап-çутă кунчаллă сăран атăпа.

Ещĕк ураписем çине ачасене лартса тухнисем те сахал мар. Ураписем çинчен анаççĕ, пурте çимĕк варринелле туртăнаççĕ…

Аякранах параппан çапни илтĕнет. Темĕн те пĕр çакса капăрлатнă карусель çаврăнать. Ун тавра халăх питĕ нумай пухăннă. Пĕрисем, карусель çине ларса çаврăнма черет кĕтсе, кĕпĕрленсе тăраççĕ, теприсем курса савăнаççĕ. Параппан çапаканĕ çумĕнчех пĕр кăтра каччă авкалана-авкалана хут купăс туртать.

Вăльтăрт-вăльтăрт карусель
Вăтăр, хĕрĕх çаврăнать.
Çимĕкрен те Варуççи
Хĕп-хĕпĕртĕк таврăнать.

Ах, ларса çаврăнасчĕ пĕрре… Юлташсем карусель çине ярăнасси çинчен те сăмах хускатнăччĕ.

Киле таврăнас умĕн, çынсем сахалтарах чухне, çаврăнатпăр терĕç. Унчен курса çӳремелле.

Пасар урамĕ тăршшĕпех лавккасем лартса тултарнă. Урапа çинчен япала сутакансем те пур, ал вĕççĕн суту-илӳ тăвакансем те. Вĕсен таврашĕнче тати-сыпписем халăх утать. Çамрăксем пасар варрипе хут купăс каласа, юрласа иртеççĕ.

Шĕшкĕ тĕмми айĕнче
Çырла çĕçки илемлĕ;
Пĕтĕм тĕнче умĕнче
Пирĕн çĕршыв илемлĕ.

Юртакан ыр утран, ай, мĕн юлать?
Мĕн чул çул çӳрени, ай, çав юлать.
Пирĕн çамрăклăхран, ай, мĕн юлать?
Мĕн ĕçлени-туни, ай, çав юлать…

Çимĕк халăхне куркаласа тăнă хушăра асăрхаман та, эпĕ юлташсенчен çĕтсе юлнă. Унталла-кунталла пăхкаларăм – çук. Вара çынсемпе пĕрле лавккасем патне пытăм. Унта хамăн хĕреснаттене курах кайрăм. Ăна Еххĕм пичче тетчĕç.

Еххĕм пичче хăйĕн лавккинче вак-тĕвĕк тавар сутать. Вăл çаврарах пит-куçлă, лутрарах кĕлеткеллĕ çын. Жилеткăллă костюм, пĕрме кунчаллă сăран атă тăхăннă. Тăтăшах кăкăрĕ тĕлĕнчи пĕчĕк кĕсйинчен вăчăраллă сехетне кăлара-кăлара пăхать. Хăй вăр-вар çавăрăнкалать çеç. Вăл мана юрататчĕ. Пирĕн пата пырсан, яланах шӳт тукаласа калаçатчĕ.

Эпĕ лавка умĕнче чылайччен тăтăм, анчах çав кун Еххĕм пичче (хĕреснатте ĕнтĕ) манпа калаçмарĕ. Суту-илӳ тунă май ытлашши сăмах хускатма вăхăт тупаймарĕ пулас.

Çынсем мана лавкка умĕ çумнех хĕстерсе лартрĕç. Хăйсем тупăшсах тавар кăтартма ыйтаççĕ, илеççĕ те.

Еххĕм пичче ман ума лавкка хăми çине пилĕк пус пăхăр укçа хучĕ, хăй тепĕр еннелле кайрĕ. Эпĕ тĕлĕнсе пăхса тăратăп. Ку укçана кама валли хурса пачĕ-ха вăл? Тавар илнĕ çынна тавăрса пачĕ пулсан, мĕншĕн никам та илмерĕ-ха ку укçана? Мана пачĕ пулсан, мĕншĕн вăл ун çинчен нимĕн те шарламарĕ?

Аптăранипе Еххĕм пичче еннелле пăхатăп. Вăл мĕн те пулин каласса кĕтетĕп. Анчах вăл ман енне çаврăнса та пăхмасть, çынсемпе калаçать, пĕрмай тавар сутать.

Ывăç тупанĕпе хупларăм ĕнте укçана. Мĕн тăвас?

Ман пуçăмра тĕрлĕ шухăш явăнать. Илес-ши е илес мар? (Пилĕк пус ун чухне пĕчĕк укçа марччĕ, унпа чылай япала илме пулать.) Калас-и хăйне е… Енчен укçи ман валли мар пулсан? Вара… вара вăрă пулатăп-çке. Хăйне парас е ыйтса пăхас мар-ши пĕрех хут?

Тепре шухăшлатăп та ыйтма хаяймастăп. Калас, анчах укçине вăл калла илсен, мана намăс пулать-çке. Мĕншĕн тӳрех паман, тейĕ. Эпĕ мĕншĕн ыйтнине вăл тавщăрса илет ĕнте. Тата укçине мана памĕ те.

Хам та сисмерĕм, укçана ярса тытрăм та нимĕн шарламасăрах аяккалла пăрăнтăм. Хам, хăранипе, сиксе чĕтретĕп. Хыçалтан: «Тытăр, тытăр ăна, вăл укça вăрларĕ», – тесе кăшкăрассăнах туйăнать.

Пасар урамĕ тăрăх утатăп. Ерипен çынсем çине пăхма пуçларăм. Мана никам та сăнамасть иккен, пурте хăйсен ĕçĕпе тăрмашаççĕ. Сутăн илнĕ япалисене урапа çине майлаштарса хураççĕ е пĕр-пĕринпе юмахласа утаççĕ. Вара эпĕ часах лăплантăм. Хама хам хăюллăрах тыта пуçларăм. Мĕнех вара пилĕк пус! Еххем усламçăн ун пеккисем темĕн чухлех…» Тепĕр лавка патне пырса та тăтăм.

Манăн тахçанах пуçламан кăранташ туянас килетчĕ. Шкулта пире ун чухне учительницă çуршар кăранташ çеç татса валеçетчĕ. Ăна та, çухатасран, анне ман кĕпе çумне çыхса яратчĕ.

Çавăн пеки те пулчĕ, ачасемĕр, пирĕн ĕмĕрте. Япали сахалтарах, ăна питĕ тирпейлĕ, перекетлĕ тыткалас пулать. Хут-кăранташ илме те килте укçи çитместчĕ. Пĕр хушă тата юман çăпанĕпе тутăх пăтă ярса чернил тăваттăмăр.

Кăранташ кăтарт-ха, – терĕм усламçăна. Вăл мана тӳрех виçĕ кăранташ тыттарчĕ. Эпĕ пĕр кăранташне суйларăм та иккĕмĕшне каялла патăм. Çавăнтах вĕсенчен пĕрне тепĕр ача илчĕ. Вăл укça тӳлене вăхăтра эпĕ кăранташа кĕсьене чикрĕм хутăм. Пилĕк пус укçана усламçăна тыттарас тесе тăратăп…

Çав вăхăтра усламçă тепĕр енелле çавăрăнчĕ, мана çинсем лавкка умĕнчен хĕссе кăларчĕç. Эпĕ нумаях шухăшласа тăмарăм, малалла утрăм.

Вăт телей-тĕк телей! Пилĕк пус та кĕсъере, кăранташ та пур. Кăранташĕ тата ахалли мар, химически пулнă. Ăна эпĕ пĕр пуçĕнчен чĕлхе вĕçĕпе йĕпетсе пĕлтĕм. Ун пеккине туянма тахçанах ĕмĕтленччĕ-ха. Унтан эпĕ пилĕк пус укçапа кăштах пĕремĕк, хутпа чĕркенĕ канфет, хĕвел çаврăнăш илтĕм. Юлашкипе карусель çинче те ярăнтăм.

Киле каяс умĕн юлташсемпе тĕл пултăм. Кашнинех кăшт хĕвелçаврăнăш парсан, вĕсем тĕлĕнчĕç.

– Эсĕ, Сантăр, ăçтан укçа тупрăн вара? – тесе ыйтрĕ Ваçça.

Унччен эпĕ нихçан та суйманчĕ, анчах та çавăн чухне манăн теменшĕн тĕрĕссине калас килмерĕ.

– Анне парса ячĕ, – терĕм çеç эпĕ.

– Аннў?.. Суятăн. Вăл эсĕ паян кунта килнине те пĕлмест пулĕ-ха. Тата унăн укçи те çук-ха, пĕлетĕп. Кăштах пулсассăн та, сана вăл вырăнсăр тăккалама парса ярас çук, – терĕ Ваççă. Ыттисем те ман çине ĕненмесĕр пăхрĕç. ( Çумра укçа пулнă пулсан, çул çинчех каламалла!)

Чăнах та ĕнте, эпир питĕ чухăн пулнă. Атте патша вăрçинче вилнĕ. Эпир аннепе иксĕмĕрех пурăннă. Ăçтан унта вак-тĕвекшĕн тăккаламаллăх укçа пултăр? Юлташсене тĕрĕссине каламалла та, анчах пĕрре урăхла сăмах персе янă хыççăн манăн ниепле те чăннине калама çук.

– Пачĕ çав, – тетĕп, – акă, курăр эпĕ кăранташ та илтĕм, химически… – тетĕп.

Юлташсем пурте кăранташа тытса пăхрĕç. Вĕсенчен сурчăкпа йĕпетсе, пўрнисене вараларĕç – чăнах та химически иккен. Эпĕ кăранташа вĕсене те çырма кирлĕ чух пама пултăм.

– Юрать, Сантăр, юрать. Пит те лайăх ĕнтĕ, – терĕç вĕсем, пурте манпа килĕшсе. Вара, хĕвел çаврăнăш вăрри шĕкĕлчекелесе, килелле утрăмăр.

Килте мана анне тахçанах кĕтнĕ пулнă. Апат çиме ларсан, вăл ман çине пăхрĕ те:

– Мĕн пит çутăлса килтĕн, çимĕкре кулачĕ çитермерĕç пулĕ-çке, ывăлăм, – терĕ.

Аннене тĕлĕнтерес тесе, эпĕ малтан юриех нимĕн те шарламарăм. Кăштах тăхтасан хайхи кăранташа кĕсъерен кăлартăм та шăкăрт! хутăм сĕтел çине.

– Акă кур. Анне, мана мĕн парса ячĕç! – терĕм.

– Кам пачĕ ăна сана, ывăлăм? – тесе ыйтрĕ вăл лăпкă сасăпа.

Вара эпĕ, савăнса, аннене пĕтĕмпех каласа патăм.. Ĕнте анне мухтасса кĕтсе ларатăп, анчах ĕç пĕтĕмпех урăхла пулса тухрĕ.

Эпĕ каласа панине анне питĕ хумханса итлерĕ. Пĕрре хĕрелсе, тепре шуралса кайса ларчĕ. Унтан питне сапун аркипе хупларĕ те ĕсĕклесе йĕрсе ячĕ.

– Ай-яй, мĕнле-ха капла, ывăлăм? Мĕн туса хутăн эсĕ, Сантăр? Пĕтетĕн-çке, ачам. Вăрлама тытăнтăн-и?.. – терĕ.

Анне çине пăхса, эпĕ хам та макăрма пуçларăм. Вăтаннипе пуçăма унăн чĕркуççийе çине хутăм.

Чылайччен макăрнă хыççăн анне ман пит-куçăма саппунĕпе шăлса тасатрĕ те çапла каларĕ:

– Ну, юрĕ-çке. Çитĕ ывăлăм, лăплан… Йĕрсе-макăрса нимĕнех те тăваяс çук. Аллу кукăрăлсах кайиччен ăна çийĕнчех тўрлетес пулать. Усламçă Еххĕм пире ютах мар. Унăн сана çимĕк ячĕпе кучченĕç илсе пама тивĕç те пур-и, тен? Çапах та унăн япалине, унăн укçине вăрттăн илсе чикме юрамасть. Илтетĕн-и çакна, Сантăр? Юрамасть, тетĕп!.. Пилĕк пусĕшĕн ăна çăмарта парăпăр, çырлахĕ. Анчах малашне эсĕ нихăçан та, никамĕнне те, нимĕн те ан тĕкĕн. Асту, йывăçа вăхăтра тĕкĕ памасан, вăл пĕтĕмпех тайăлса анма пултарать, тенĕ ваттисем. Ачаллах пăсăлсассăн…

Анне йывăррăн сывласа илчĕ те кăштах чарăнса тăчĕ. Аттене аса илчĕ курăнать. Унтан вăл темле хурлăхлă сасăпа малалла калама пуçларĕ.

– Эпĕ чухăн ĕнте, тăлăх арăм. Пысăк асаппа тертленсе пурăнатпăр. Апла пулин те, эпĕ çын япалине тĕкĕнмен, ăмсанман та. Эсĕ, авă, Сантăр, пĕр кун хушшинче икĕ юрăхсăр ĕç тунă. Иккĕ çеç те мар, ытларах та. Юлташсене тĕрĕссине каламан, суйнă. Намăс мар-и сана, Сантăр? Мĕншĕн ун пек хăтланатăн эсĕ? Юрать-ха мана, аннўне, каласа патăн… Укçана ыйтмасăр илни çинчен хăвах кайса пĕлтер. Халех кай та тĕрĕссине кала. Ытти пирки…малалла мĕн-мĕн тунине те кала эсĕ ăна. Каçару ыйт. Кăранташне ĕнтĕ…(Анне сĕтел çине выртакан кăранташа алла илчĕ.) Йăкăртнă, вăрттăн илсе тарнă япала… мĕн тăвас-ха. Хуçăм та перем, акă вучаха. Вăрланă япала вăл. Мĕнле куçпа пăхăн ун çине? Мĕнле çырăн унпала? Çунтаратăп та яратăп? – терĕ, аллипе сĕтеле çатлаттарса.

Анне кăранташа хуçма тăчĕ

– Ан тив, ан тив-ха, анне. Тăхта!.. – çухăрса ятăм эпĕ. – Е пăрах эппин вучаха, пăрах! Пĕттĕр, çĕттĕр куç умĕнчен пĕрех хут!.. – Хамăн каллех куççуль шăпăртатса анчĕ.

Анне ман çине чылайччен шеллесе пăхса тăчĕ. Унтан:

– Ну, юрĕ-çке, юрĕ эппин, ывăлăм. Тивмĕп, хуçмăп. Ме! Леçсе пар хуçине, халех чуп, айăпна йышăнма пĕл, – терĕ вăл татăклăн, мана чăмăрĕсемпе юна-юнах. Çав хушăра хăй шывланнă куçĕсемпе шăла-шăла илет.

Эпĕ çавăнтах кăранташа ярса тытрăм та пасар ялне кайма тăтăм. Анне мана тытса чарчĕ.

– Çук! Çук-çук, ывăлăм… Ямастăп! Ниçта та каймастăн. Сана тек шанма та, ачам.. Ят ярса кăна çўрен. Кам ачи ку? – Çавăн, – тейĕç. Вăл авă мĕнле иккен, пĕчĕклех вăрра вĕреннĕ, текенсем те тупăнĕç.

Сăмахĕ мана ытларах лекĕ. Эх, Сантăр, шыраса тупрăн ăша çунтармалли!.. Чим, Еххĕм кум патне хам каятăп. Вăл пĕтĕмпех майлаштарĕ… Е, çук! Паян каяс мар…

Анне пĕтĕмпех вĕриленсе кайрĕ. Нимĕн тума пĕлмест, хурланнипе йĕре пуçларĕ. Хамăн та чун кӳтсе çитрĕ. Тек чăтса тăма çук.

– Эпĕ хам каятăп, каятăпах, анне. Ан кӳрен-ха эсĕ, аннем, ан çиллен…Хам айăпа, ку инкеке манăн хамăннах сирмелле… – терĕм те пӳртрен чупса тухрăм. Тӳрех пасар еннелле вĕçтертĕм.

Сăмаха тӳррĕн, нимĕн суймасăр каланăшан Еххĕм пичче мана ырларĕ. Анчах хăйне темле урăхларах, ман çине çилленнĕ пекрех пăхнăн туйĕнчĕ.

– Укçине ăна хăвнах патăм та-ха. Ун çинчен эпĕ…акă мĕн, ачамккă, халь мар-ха, терĕ. Сӳрĕкреххĕн тата та темиçе сăмах хушрĕ.

Мана лавкка умĕнче мĕскĕннĕн тăраканскерне, паçăр вăл  асăрханă иккен. Херхенесси те кăштах пулнă-и, тен? Çимĕк кучченĕçĕ тутанса пăхтар, тенĕ-и ĕнтĕ? Тен, юри ман кăмăла, эпĕ мĕнле ача иккенне сăнаса пĕлесшĕн те пулнă пулĕ. Ман ума укçа хурса хăварчĕ те хăй пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Халĕ те темле… Халĕ вăл çав пилĕк пусшăн çăмарта илесси-мĕн пирки те шарламарĕ, аннепе темĕн çинчен калаçса пăхма шутлани çинчен çеç асăнчĕ.

Çимĕк пуххи саланса пĕтме те пуçланă. Лавккасем умĕнче кĕпĕрленсе тăраканем çук. Тавар илекенех те курăнмасть. Çапах та усламçă манпа калаçасшăнах пулмарĕ. Вăл аллине çĕклерĕ те мана хут-кăранташ  сутакан лавка еннелле кăтартрĕ çеç.

Кăранташ хуçи – типшĕмрех, тăрăхларах сăн питлĕ, хурчка сăмсаллă, вăрăм кĕлеткеллĕ усламçă. Хура халат тăхăннă, пуçе çине кивĕрех шелепке лартса янă. Выçă куçлă хăй, сивлеккĕн  пăхать.

Кăранташа илчĕ те вăл хама тӳрех хăлхаран ярса тытрĕ. Кăра çиллĕ выçтах мана çавăнтах туласа, лутăркаса тăкатчĕ пулĕ.  Кăшкăркаласа калле-малле турткалама пуçларĕ. Юрать-ха, пирĕн телее, Павел Петрович çавăнтах тытса чарчĕ.

– Ан тив ачана, ан çап! Хăй йăнăшнипе вăл хăйех чухласа илнĕ…

– Чухланă сана. Тата мĕн те пулин шăхăртасшăн çӳрет пулĕ-ха, – терĕ ăна хирĕç уçламçă.

– Çук, йăнăшатăн, Карпăч. Чухласа илмен пулсан, кăранташа вăл сан патна каялла илсе килес те çукчĕ, – терĕ учитель. – Ачан кăранташ туянас килнĕ, вĕренесшĕн ĕнтĕ. Чăнах, кăранташшăн сана укçа паман вăл. Укçи те пулман пулĕ, анчах япалана апла илсе кайма юраманнине кайран тавçăрса илнĕ…

Учитель мана хулран тытрĕ те хăй патнерех туртса илчĕ. Эпĕ мĕн ятлине, хăш класра вĕреннине ыйтса пĕлчĕ.

– Çапла, Фĕдор Карпăч. Сантăр, авă вĕренме те çӳрет. Малалла вĕренесшĕн вăл. Ятласса та ятламалла пулĕ те-ха ăна çак пулса иртнĕ ĕçшĕн. Паллах, ахаль хăвармалла мар. Ăсне-тăнне хытарасах пулать. Анчах, акă мĕн, Федор Карпыч, кӳр-ха эсĕ кăранташна, çав кăранташах… Ачана пар ăна.  Ме ил, укçине хам паратăп, – терĕ учитель, Карпăча пăхăр укçа тыттарса.

– Кăранташа илсе панă хыççăн учитель манпа пĕрле кăштах аяккалла утрĕ те йăвашшăн атте-анне çинчен ыйтса пĕлчĕ. Унтан çапла каларĕ:

– Çын япалине нихăçан та ан тив. Уйрăмах шкулти япаласене ан пăс, ан çĕмĕр. Халăх пурлăхне ан тĕкĕн, ăна тирпейлĕ упрама вĕрен. Аннӳне хисепле, юлташусемпе та харкашса хирĕçесрен сыхлан. Вара эсĕ йĕркеллĕ çын пулатăн, – терĕ учитель. Чылай вĕрентсе каларĕ. Юлашкинчен:

– Паянхи ĕç çинчен аннӳ пĕлсен мĕн калĕ? Мĕнле тӳссе иртерĕ? – терĕ учитель. – Аннӳне эпĕ кăштах пĕлетĕп. Вăл хавшак чĕреллĕскер, хыпăнса ӳкетех…

– Пĕлет вăл, Павел Петрович, пĕлет. Эпĕ ăна пĕтĕмпех каласа патăм. Анне малтанах кăранташа кăмакана пересшĕнччĕ. Хуçма, çунтарса яма памарăм. «Кунта чупса килетĕп» – терĕм. Анне тарăхса кайни, хурланса йĕни çинчен те каларăм.

Эпĕ çине тăрсах пасар ялне чупса килнине учитель ырларĕ. Хăвăртрах анне патне тавăрăнма хушрĕ.

Çинçе те пилĕк çӳрен лаши те,
Çинçе те пилĕк çӳрен лаши…

Çамрăксем юрласа иртеççĕ. Мĕн чухлĕ аса илмен пулĕ эпĕ вĕсен юрри-кĕввисене. Уйрăмах çав кун ирхине илтнĕ кĕвĕ хăлхаран каймасть.

Çӳрен те ыр утран, ай мĕн юлать?
Мĕн чул çул çӳренисем, ай çав юлать.
Пирĕн те çимĕкрен, ай мĕн юлать?
Мĕн курни те илтни, ай çав юлать.

«Çакă та çимĕкрен»… «Çимĕкрен-уявран, ай, мĕн юлать?..» текелесе, хушăран юрласа та илетĕн. Пулни-илтнисем куç умне тухаççĕ.

Капăр каруселĕ хăй ĕçнех тăвать. Шăнкăрав шăнкăртатса илет те, хут купăсĕ никĕлтетме тытăнать. Йĕс ывсăллă пысăк параппанĕ панклатать те чанклатать, карусельне васкатать.

Хĕвел каçа сулăнать.
Атьăр тата тепĕр хут
Çавăрлан пек çаврăнар,
Çаврăнар та савăнар!

Вăйăнк, вăйăнк самокат
Хăвăрт-хăвăрт çаврăнать.
Тулли кăмăл-туйăмпа
Уяв тума ыр сунать.

Савăнмалла. Курмалли те нумай, итлес те килет. Кăмăллăм та ĕнтĕ халĕ урăх. Чун-чĕрене паçăрхи пек тăвăр мар. Анчах киле васкамалла.

Анне тем пекех кĕтнĕ эпĕ таврăнасса. Урамра, хамăр кил-çурт тĕлĕнче пăхса тăнă. Шикленнĕ те пулĕ, мĕскĕн. Хурланнă та, кӳреннĕ, савăннă та-и тен, мана курсан. Хĕрхеннĕ ĕнтĕ хăйĕн пĕртен пĕр ывăлне.

Аннен ачаш аллисем  мана ыталаса илчĕç. Çупăрлаççĕ ерипен. Пĕчĕк çамкам çине пĕр тумлам вĕри куççӳлĕ татăлса анчĕ. Пĕçертсех ячĕ вăл мана.

Çапла пулса тухрĕ, ачасем, манăн çимĕк историйĕ. Ку  истори хам виличчен те асăмран тухас çук.

Çавăн хыççăн эпĕ çыннăнне ыйтмасăр пĕр япала та илмен. Вăрçса тӳпелешсе те çӳремен. Савăншăн ĕнтĕ чунтан савăнатăп, кăмăлăм манăн уçă.

Çапла, ачасем, эпĕ ӳссе çын пултăм. Асатте ятне илтме те тивĕç ситрĕ. Тавтапуçах юратнă аннепе çав Павел Петрович учителе. Çавăншăн ăшăмра вĕçĕмсĕр тав тунă эпĕ вĕсене. Ун çинчен хăйсене те калана. Халĕ те вĕсен ятне ăшшăн асăнатăп. Эсир халĕ – совет ачисем, пионерсем. Совет çыннин чысĕпе пысăк тивĕçĕ çинчен сирĕн уйрăмах лайăх пĕлес пулать.

Юлашкинчен сире, ачасем манăн çакна та каласа пĕлтерес килеть.

Усламçă Еххĕме (хреснаттене ĕнтĕ) эпир çав 5 пусшăн çăмарта-мĕн паман. Анне вĕсене килĕнче ĕçлекелесе те майлаштарнă курăнать. Вăл пире уй-хир ĕçĕсем вăхăтĕнче  е килте пулăшма чĕнетчĕ.

Хамăр учитель вара, Павел Петрович, кăранташшăн укçа илме килĕшмерĕ, парас терĕмĕр-те – яхăнне те ямарĕ. Илме мар, хăй пире кучченеç парса ячĕ. Эпир вĕреннĕ чухне кĕнеке-хут илме те вăл пире чылай пулăшрĕ. Тĕрĕссипе каласан, вăл пире нихçан манмалла мар ырă турĕ. Йăнăш ярса пуснă урана калле илме, мана тӳрĕ çул çине тухма пулăшрĕ. Мана çеç-и, таврари мĕн пур çамрăка тата ваттисене те ырă тăватчĕ.

Хамăра ăс-тăн паракана, йĕркеллĕ çын пулма вĕрентекене чун-чĕререн тавтапуç!

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.